Пирён интервью

Усал ёçсен çулё татăлтăр

Районти шалти ёçсен пайён ертӳçи Евгений Дмитриевич Макаров, хаçат хăни пулнă май, йёркелёх хуралçисен иртнё çулхи ёçё-хёлёпе пётёмёшле паллаштарчё, ыйтусем çине хуравларё.

– Евгений Дмитриевич, иртнё çула мёнле кăтартусемпе вёçлерёр?

– Çулталăк пуçламăшё – иртнё çула пётёмлетмелли, малашлăх планёсем тумалли вăхăт. Шалти ёçсен пайён дежурнăй чаçне «02» телефонпа çулталăк тăршшёпе 4253 шăнкăрав килнё. Паллах, пулăшу ыйтса. 2005 çулта вара 2791 гражданин пулăшу ыйтнă телефонпа. Кашни тёслёхпе тёрёслев-тёпчев ирттермелле. Кунта вара ёç калăпăшё пысăкки каламасăрах паллă. Çак кăтарту çынсем пире ытларах шанни, пулăшу кётни çинчен калать.

Юлашки вăхăтра преступленисен йышё района çеç мар, унăн тулашёнче те самай пысăкланни палăрать. Çулталăк тăршшёпе преступленисен шучё 772-пе танлашрё е çакă 2005 çулхинчен 36,4 процент ытларах. Усёме çийёнчех палăртса хăварас килет. Республикăри тивёçлё шайри ёçченсем тата районти шалти ёçсен пайённе вăй хуракансем тимленипе 12 çынран тăракан ушкăна тытса чарма май килчё. Вёсем 130 преступлени тунине тупса палăртрăмăр. Халё ку ушкăнпа прокуратура ёçлет.

Çавăн пекех преступленисене уçасси те самай хăпарчё. 2005 çулта 353 пулнă пулсан, иртнё çул вара 541 преступлени уçма пултартăмăр е 65,7-рен 74,3 процент. Республикăри кăтарту 50,9 процентпа танлашать.

Шырав тата тёпчев ёçне вăйлатнине пула унччен пулнă преступленисене уçса пама май килчё. Çакă вăл пирён сотрудниксем витёмлёрех ёçлеме тытăннине çирёплетет. Ял тăрăхёнче вăй хуракан уполномоченнăйсем тăрăшнипе те чылай преступление уçма пултартăмăр.

– Обществăлла йёркене пăсакансем, преступление тăвакансем ытларах хăш категорири çынсем?

– Яланхи пекех кунта малти вырăнта – ёçсёррисем. 2005 çулта вёсем 190 преступлени тунă пулсан, иртнё çул 361-не çити ӳçрё. Ӳсёрле тунисем 88-тан 104 преступление çитрёç. Малтан судпа айăпланнисем йёркене пăснă 91 тёслёх тупса палăртрăмăр. Кунта преступленисен çăл куçё ăçтан тухни аван курăнать. Çакăнта шырамалла та тёп сăлтава.

– Милици сотрудникёсем тата ытти явăплă специалистсем тăтăшах рейдсене тухаççё, çак мероприятин витёмё сисёнет-и?

– Учрежденисемпе предприятисен, шкулсен ертӳçисем хушшинчи хутшăнусем тачă çыхăнура. Шалти ёçсен пайён сотрудникёсемпе райадминистраци ёçченёсем пёрле ирттерекен мероприятисен усси те палăрать. Çул çитменнисем преступлени тăвассине çулталăк хушшинче, нумаях мар пулин те, чакарма май килчё.

Вăрланисен шучё 313 пулнă пулсан, иртнё çулăн вёçне 287-пе танлашрё. Лавккасене çёрле çаратассине 2005 çулта 12 тёслёх регистрациленё, пёлтёр ку кăтарту 4 пулчё. Çакă профилактика ёçён активлăхёпе витёмлёхне кăтартакан паллă теес килет. Тăтăшах рейдсем ирттернин усси пултăрччё. Автомототранспорт вăрласси 2 тёслёх тупса палăртрăмăр, ăна уçасси 33,3 процентпа танлашрё. 2005 çулта вăрланă 9 преступлени регистрациленё, ăна уçасси 25 процент пулнă.

Паллах, кашни уйрăм хуçалăха, хваттере рейдпа çӳрейместён, хурал тăратаймастăн. Хваттерсене çаратасси самай ӳсрё. Çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăхран (40), дача çурчёсенчен (38) вăрланă тёслёхсем ӳсрёç. Вёсене тупса палăртассине 56,5-ен 72,7 процента çити хăпартма пултартăмăр.

Кёсье телефонё вăрланă 75 тёслёх регистрацилерёмёр. Вёсенчен 38-шне хуçисене тавăрса панă. Паллах, çынсен хăйсен тимлёрех пулмалла. Ытларахăшён телефонсемпе обществăлла транспортра сыв пуллашма тивет.

Хуçалăхсенчи, учрежденисенчи 9 хуралçăна айăплама тиврё. Кунта манăн уйрăмах ертӳçёсене тимлёрех, çирёпрех пулма ыйтас килет.

2005 çулта çын вёлернё 7 тёслёх пулнă. Иртнё çул 3 преступлени регистрацилерёмёр. Пурне те ответ тыттартăмăр. Хёç-пăшалпа усă курса тунă преступленисем тата уйрăм хушма хуçалăхсенчен ёне выльăх çухални тёл пулман.

Йăлари преступленисен шучё пысăк. Ытларах чухне усаллине çиеле кăлараканни чи малтан ёçкё пулса тăрать. Эрех сутакансем йышлă. Суррогат сутуçисем кӳршё-арша самай сиен кӳреççё. Çавăнпа та çак синкере çиеле кăларма обществăн пёрле вăй хумалла. Ёнчен те ку ёçре ял çыннисем пулăшмасан, милицин пёччен вăй сахалтарах та.

Наркотиксемпе усă курнă 8 преступлени регистрациленё, пурне те тупса палăртнă, вёсенчен 4-шне ял çыннисем пулăшнипе.

Экономика тёлёшпе тунă 85 (72) преступлени тупса палăртрăмăр. Укçатенкёпе тёллевлё усă курнине тёрёслесех тăратпăр. Çавăн пекех палламан çынсем ялсенче суту-илӳ туса ултавлă 1 пин тенкёлёх укçасем парса хăварнă 6 преступление тупса палăртрăмăр. Ку тёлёшпе питё тимлё пулма ыйтас килет. Ёнчен те ун пек тёслёхсемпе тёл пулсан, пёр тăхтаса тăмасăр пирён пата шăнкăравлăр.

Çул-йёр правилисене пăхăнманран тёрлё синкер пулнă 12 тёслёх регистрацилерёмёр. Çакă 2005 çулхинчен икё хут нумайтарах. Вёсене 87,5 процент уçнă. Хальлёхе 2-шне уçма май килмерё (сусăрăннисем авари тёлёнчех вилсе кайнă).

Пётёмпе 5867 çынна административлă майпа явап тыттарнă. 2005 çулта 5685 пулнă. Сиен кӳнин 70,9 процентне каялла тавăрса панă е 5 миллион та 700 пин тенкё.

– Хăш ял тăрăхёнчи луру-тăру уйрăмах хумхантарать?

– Хăш-пёр ял тăрăхёсенче преступленисем тăвасси самай ӳсрё: Муркаш ял тăрăхёнче (78-134), Москакасси ял тăрăхёнче (70-91), Çатракасси ял тăрăхёнче (31-49), Ярославка ял тăрăхёнче (15-26). 2005 çулхинчен сахалланнисем те пур. Вёсем Уйкас Янасал ял тăрăхёнче (12-10), Ярапайкасси ял тăрăхёнче (38-25), Турай ял тăрăхёнче (49-27).

– Евгений Дмитриевич, камсене уйрăммăн палăртас тетёр?

– Хамăрăн çăмăл мар ёçри хăш-пёр сотрудник ячёсене ырăпа асăнса хăварасшăн. И.И. Петров участковăй, Мускав хулинчи конкурса хутшăнса, «Профессири чи пултарулли» ята çёнсе илчё. А.Н. Чекалин генерал-полковникран Тав çырăвё илме тивёç пулчё. А.И. Алексеева аслă следовательпе А.А. Кабуркин следователь, С.В. Егоров тата М.М. Мясников оперуполномоченнăйсем, çул çитмен çамрăксем енёпе ёçлекен Л.Г. Плечова, патрульпе пост службинче тăрăшакан Е.Н. Кудряшовпа Н.В. Александров ыттисемшён ырă тёслёх пулса тăраççё. А.В. Лаптев кинолог пултарулăхне кура вăхăт çитмесёрех аслă прапорщик ятне тивёç пулчё. Çавăн пекех С.А. Иванов эксперт-криминалист Чăваш Республикин Шалти ёçсен министерствинчен Тав çырăвё илчё. Çамрăк сотрудниксен вёсенчен вёренмелли пур-ха.

Йăлана кёнё тăрăх пирён ёçченсене Чечен Республикине командировкăна илсе каяççё. Иртнё çул 8 милици сотрудникне вăрăм çула ăсатрăмăр. Вёсене тата çемйисене чăтăмлăхпа тӳсёмлёхшён тав сăмахё калас килет.

– Пётёмлетёве мёнле сăмахсемпе вёçленё пулăттăр?

– Эпё чи малтан çынсене хăйсене асăхануллăрах пулма ыйтасшăн. Шиклентерекен пулăмсемпе тёл пулсан пирён пата 2-16-67 (дежурнăй) тата 2-11-59 (шалти ёçсен пайён пуçлăхё) телефонсемпе шăнкăравлама манмалла мар. Çакă преступленисене сирме, сахалтарах сиен кӳме тата ытти пулăмсенчен вăхăтра хăтăлма пулăшё.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Спорт хыпарёсем

Пултарулла боксерсем



Кăçалхи январён 11-13-мёшёсенче Çёрпӳре бокс енёпе турнир иртрё. Унта Ульяновск, Оренбург, Самар облаçёсенчен, Тутарстанран тата ытти регионсенчен 150 боксер хутшăннă.

Ăмăртăва Муркаш районёнчен 5-ён кайнă. Турнирта Н. Скворцов, 38 килограмлă виçеллё спортсмен, 1-мёш вырăн йышăннă, Раççейри ăмăртăва хутшăнма тивёç пулнă 1-мёш претендент. Вăл Чăваш Республикин пёрлештернё командипе Анапа хулинче вăй виçё.

Çавăн пекех Е. Ярухин 34 килограмлă спортсменсем хушшинче 3 кёрешӳре те çивёч пулса 1-мёш вырăн çёнсе илнё. Ăна Чăваш Республикин пёрлештернё командине кёртнё.

А. Блинов 42 килограмлă виçеллё спортсменсем хушшинче 2-мёш вырăна тухнă. Унăн тăрăшулăхне уйрăмах палăртас килет. Вăл кулленех Атапай ялёнчен тренировкăна çӳрет.

С. Филиппов 36 килограмлă виçеллё спортсменсем хушшинче 2-мёш вырăна тухнă. Ăна турнирăн чи пултарулла боксерё пулнине палăртнă.

С. Черкашин, А. Тимофеев, А. Никитин спорт мастерён кандидачёсем Росинкăна черетлё тренировкăна кайрёç. Вёсем çитес вăхăтрах Саратов хулинче пулса иртекен Раççей шайёнчи ăмăртăва хутшăнёç.

Çавăн пек пултарулла спортсменсене хатёрлеççё С.В. Черкашин аслă тренерпа О.А. Сютруков тренер.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчёкре: турнира хутшăннисем.

Автор сăн ӳкерчёкё.

Шкулсенчен хыпарлаççё

Çамрăк математиксен уявё

Математиксен ăмăртăвё вăл – тёрлё шайри математика задачисене шутлас енпе тупăшни. Ку ăмăрту, спортри пекех, ачасене питё килёшет. Вёсен çёнтерес килет, выляса ярас килмест, çавăнпа нумай ёçлес кăмăл çуралать. Паллах, ачасем математикăпа интересленеççё, тарăнрах тёпчеме пуçлаççё.

Хальхи вăхăтра тёрлёрен командăсен математика ăмăртăвёсене (командăсен математика олимпиади, математика кёрешёвёсем) ирттереççё.

Чăваш Республикинче 5-11 классенче вёренекен çамрăк математиксен черетлё вун пёрмёш турнирё иртрё. Ăна Чăваш патшалăх университечён математика факультечё йёркеленё.

Кăçал ăмăртăва пурё 90 команда хутшăнчё. Çивёч кёрешӳре 6-мёш класра вёренекенсем хушшинче пирён район команди 4-мёш вырăн çёнсе илчё. Пирён районтан унта Москакасси шкулёнче вёренекен Артем Поркин, Галина Григорьева, Анна Царева, Юрий Феденев, Таня Соколова, Вася Еропанов хутшăнчёç. Вёсене математикăна Нина Ивановна Иванова вёрентет.

5-мёш класс командине Муркаш шкулёнче вёренекенсенчен пухрёç. Надя Краснова, Тарас Тарасов, Коля Павлов, Женя Чернов, Анжела Иванова хăйсен математика учителё Любовь Петровна Николаева лайăх вёрентнипе япăх мар пёлӳ кăтартрёç.

Çёнтерӳçё-командăсем те, çав шутра призлă вырăн йышăннă уйрăм участниксем те, дипломсемпе хаклă парнесене тивёçрёç. Çёнтерейменнисем те хурланмарёç, вёсем математикăна татах та тарăнрах тёпчеме вăй илсе килчёç.

Çакăнта вёрентӳ уйрăмёнче ёçлекенсене пёр сёнӳ парас килет. Шкулсенче ёлёкрех тёрлё предметсемпе кружоксем ёçленё теççё. Халё шкулсен укçа çук пирки çак предмет кружокёсене хупса пётернё. Учительсен те укçасăр ёçлес килмест ёнтё. Ял ачисен вара кружоксемшён тӳлеме укçи çукрах. Çавăнпа пёлӳшён çунакан ачасем валли шкулсенче тёрлё предмет кружокёсене патшалăх шучёпе уçмалла. Вара çитес ăмăртусенче çёнё çитёнӳсем татах пулёç.

Тарас ТАРАСОВ.

Муркаш шкулё.

Пёлтерӳсем. Объявления

ООО «Заря» требуются повар и кухонный работник. Телефон: 34-2-16.

ООО «Декор» срочно требуются рабочие по сборке корпусной мебели и отделке внутренних помещений. Оплата сдельная, в срок.
Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Кр. площадь, д. 3.
Телефон: 8-905-343-08-10. 2-3.

ИП «Иванов» предлагает населению и предприятиям-организациям оконные и дверные блоки, балконные рамы по индивидуальным заказам по договорной цене. Изготовляем деревянные евроокна с двухкамерным стеклопакетом. Цвет по желанию заказчика. Производим резку стекла по вашим размерам. Предоставляются новогодние и рождественские скидки 10 процентов до 31 января 2007 года.
Тел.: 8-905-346-81-95, 8-906-130-92-99. 10-10.

Сёт-çу заводне хирёç вырнаçнă йышăну пунктёнче ёне-выльăх тата сурăх-така тирёсене хаклă хакпа йышăнатпăр. Сурăх-така туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 2-3.

Куплю сено от 500 до 1000 кг.
Телефон: 8-909-302-45-02.

26 января в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.

Продается сено тюкованное. Обращаться по адресу: д. Сидуккасы. Васильевой Галине Григорьевне.
Телефон: 34-3-31 (домашний), 8-927-851-33-58.

Муркашри сёт-çу завочён коллективё кунта ертӳçёре ёçлекен В.А. Калининăн амăшё

Нина Емельяновна
КАЛИНИНА

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата çывăх çыннисемпе хурланса пёлтерет.

«Восток» ял хуçалăх производство кооперативё тата хуçалăхри ветерансен канашё хуçалăхра нумай çул хушши агрономра ёçленё А.А. Калинин ёç ветеранён мăшăрё

Нина Емельяновна
КАЛИНИНА

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванёсемпе тарăннăн хурланса пёлтереççё.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇЁНТЕРӰ ЯЛАВЁ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Заместитель гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3472.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулёпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 23.01.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.